Пурăнмалли вырăна приватизациленĕ чухне ирĕк ыйтакан çывăх çынсен йышне пĕчĕклетнĕ

**ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ...** 2

Александр Артемьевăн «Улма йывăç авăнать» произведенийĕнче – тăван ялĕн кун-çулĕ

**ЫРĂ ЙĂЛА-ЙĔРКЕПЕ ПУЯН ПОВЕÇ** 3

Çак сăмаха Енисей тăрăхĕнчен куçса ларнă йăхсем илсе килнĕ иккен

**КĔÇТЕМĔРПЕ ÇĂВАÇ МĔНШĔН ÇĔТĔК?** 4

ВУЛĂР — ПАЯН — ТЕПĔР НОМЕРТЕ

Нестор Виноградов артист Айтар сăнарне куракана асра юлмалла калăпланă

**«ЫЙТУ-ХУРАВ» страница** 4

Халăхра «автоподстава» ят пама ĕлкĕрнĕ мел Шупашкарта та тымар янă



**ИЛĔРТЕТ ОСАГО УКÇИ** 3

Илемлĕх конкурсĕн пĕрремĕш çĕнтерӳçи Юлия Суханова: «Куççуль юхса анчĕ, корона айккинелле пăрăнчĕ...»

**МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ** 4


чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

99 /26505/ № | Эрне кун, 2014, çу (май), 30 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


## Саламлатпăр

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2014 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 356-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн, Раççей Федерацийĕн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне сумлă тӳпе хывнăшăн, Раççей Федерацийĕн тулаш политика çул-йĕрне пурнăçа кĕртнĕшĕн, гуманитари сферинчи тава тивĕçлĕ ĕççемшĕн, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн, общество ĕçне хастар хутшăннăшăн Чăваш Республикинчи çул-йĕр, инженери сечĕсемпе сооруженийĕсен строительстви енĕпе ĕçлекен акционерсен уçă обществин автомобиль кранĕн машинистне **Владимир Николаевич СУТЕСОВА ТУСЛĂХ ОРДЕНĔПЕ** наградăланă; Чăваш Республикинчи Канаш районĕнчи Киров ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕн дояркине **Ираида Георгиевна КОЗЛОВĂНА "РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

* * *

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2014 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 357-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн, Раççей Федерацийĕн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне сумлă тӳпе хывнăшăн, космоса тĕпчессинчи, гуманитари сферинчи, саккунлăха çирĕплетессинчи тава тивĕçлĕ ĕççемшĕн, саккун çырас тата общество ĕç-хĕлне хастар хутшăннăшăн, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикинчи Канаш районĕнчи Киров ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕн автомобиль водительне **Николай Николаевич ИВАНОВА "РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

* * *

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çу уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 74-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Канаш район администрацийĕн пуçлăхне **Владислав Васильевич СОФРОНОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

пичет тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕççемшĕн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин "Красноармейски районĕн "Ял пурнăçĕ" хаçачĕн редакцийĕ" автономи учрежденийĕн пай редакторне **Виктор Михайлович ДАНИЛОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕççемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи "Лента" акционерсен уçă обществин пахалăх тĕрĕслевçине /контролерне/ **Елизавета Геннадьевна АСТРАХАНЦЕВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕççемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Красноармейски районĕнчи "Красное Сормово" тулли мар яваплă обществăн тĕп бухгалтерне **Римма Михайловна ГРИГОРЬЕВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

*Çын тата саккун*

# Коррупцие чиновнике пуç çапма тивни никĕслет




***«Коррупципе çыхăннă лару-тăру ерипен лайăхланса пыни сисĕнет, çакна граждансен, бизнес-тытăмсен хушшинче йĕркеленĕ ыйтăмсен кăтартăвĕсем те çирĕплетеççĕ. Апла тăк тĕрĕс еннелле утатпăр», – çапларах пуçларĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи коррупципе кĕрешекен координаци канашĕн ĕнерхи ларăвне. Анчах ку çивĕч ыйтусем çуккине пĕлтермест.***

Михаил Васильевич хăй вăхăтĕнче «Финн айлăмĕн», «Атăлçи платинумĕн», ыттисен строительствипе çыхăннă ĕç-пуçа пула çĕр-çĕр çын улталаннине аса илтерчĕ, ун чухне шар курнисен сиенне никам та саплаштарман, «юлашки çулсенче çĕр-çĕр миллион тенкĕ саплаштартăмăр». Çапах, калăпăр, ЖКХ сферинче паян та пăтăрмахлă тĕслĕх пайтах. М.Игнатьев Çĕмĕрле, Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи çивĕч ыйтусене çĕклерĕ. «Çынсен çав ыйтусем тĕлĕшпе пĕччен юлмалла мар. Влаçсен вĕсене тӳрĕ кăмăллă мар управляющи компанисен пăхăнăвĕнчен тухмашкăн ӳкĕте кĕртмелле», – терĕ вăл.

Çĕнĕ Шупашкар тенĕрен – «Новэк» УК директорне Ющенкăна ăшă энергийĕшĕн çынсенчен пухнă вун-вун миллион тенке ресурссемпе тивĕçтерекен компание куçарса паманшăн, тăкакласа пĕтернĕшĕн суд ирĕклĕхсĕр хăвармалли приговор кăларнă. Çав вăхăтрах, Михаил Васильевич палăртнă тăрăх, асăннă УКн директорсен канашĕн председательне Сергей Миронова «эпĕ темиçе хут та çирĕппĕн асăрхаттарнине пăхмасăр Çĕмĕрлери ЖКХ рынокне те кĕртсе янă». Çийĕнчен пĕлтĕрхи раштавра Çĕнĕ Шупашкар администрацийĕ «Новэка» 356 $м^2$ лаптăклă пӳлĕме аукцион ирттермесĕрех чăн хакĕнчен чылай йӳнĕрехпе сутнă. «Мĕншĕн ăна, мĕншĕн аукционсăрах?» – ыйтусем çуралчĕç ЧР Пуçлăхĕн.

Пуçламăшĕ те çивĕччине кура малалли калаçу екки те çавнашкалах пулчĕ. Пурлăх министрĕ Анатолий Кузьмин патшалăх тата муниципалитет харпăрлăхĕпе усă курнă чухнехи коррупци палăрăмĕсемпе паллаштарчĕ. Министерство çине-çинех тĕрĕслевсем йĕркелет те – саккуна пăснă нумай тĕслĕхе тупса палăртать. Çав шутра – пурлăх управлăхне, унпа тухăçлă усă курассине тивĕçтермен тĕслĕхсем. Çитменлĕхсем тупса палăртнисен шутĕнче министр Вăрнарти ял хуçалăх техникумне, Патăрьел райхаçатне, Шупашкарти педколледжа асăнчĕ. Муниципалитетсенче хăйсен харпăрлăхне тĕплĕ шута илменни те часчасах тĕл пулать. Çĕр лаптăкĕсем тĕлĕшпе йĕркесĕрлĕх нумай. Чăн та, ырă туртăм пур: çĕр лаптăкĕсене арендăна панинчен, сутнинчен илнĕ укçа виçи ӳсни куç кĕрет.

Республика прокурорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Александр Григорьев асăннă сферăра йĕрке тумашкăн саккун-норма никĕсĕ пуррине палăртрĕ. Эппин, яваплă çынсенчен нумай килет. Ахальтен мар ĕнтĕ прокуратура патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе усă курнă чухне йĕркене пăснин 400 ытла тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларнă. Уголовлă ĕççем те пур. Следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕн ертӳçи Александр Мигушов Шупашкар районĕнчи Сарапакасси ял тăрăхĕн, Сĕнтĕрвăрри райадминистрацийĕн экс-пуçлăхĕсем, ыттисем тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕççене асăнчĕ.

● ➡ 2 стр.



КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26

## Шупашкартан Турцие – самолетпа




***Ĕнер Шупашкарти аэропортра пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш авиарейс уçăлнă – 220 çын Airbus (A 321) самолетпа Анталья хулине çула тухнă.***

ЧР Транспортпа çул-йĕр хуçалăхĕн министерстви çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкартан самолетсем Турцие вĕçме тытăнасси çинчен республикăра пурăнакансене пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.

Çĕртме-юпа уйăхĕсенче Airbus Антальяна расписанипе килĕшӳллĕн эрнере пĕрре вĕçет. Мускав вăхăчĕпе 15 сехет çурăра сывлăша çĕкленет, курорт-хулана вырăнти вăхăтпа 19 сехет çурăра çитет. Каялла 8 сехет çурăра (вырăнти вăхăт) çула тухать, 12 сехет çурăра (Мускав вăхăчĕ) Шупашкарти аэропорта анса ларать.

Çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче авиарейс Сургут хулине те çĕнĕрен уçăлать.

**И.АНИСИМОВА.**

## Вĕренӳ иртет

***Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн пресс-службин пĕлтернĕ тăрăх – çĕртме уйăхĕн пĕрремĕш вунă кунлăхĕнче Чăваш Республикинчи терроризма хирĕç операцисене йĕркелекен оперативлă штаб Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар хулисен тата Сĕнтĕрвăрри районĕн территорийĕнче анлă вĕренӳ ирттерме палăртать.***

Вĕренӳ тĕллевĕсене пурнăçлама çар техникине, шывра ишмелли хатĕрсене тата авиаци явăçтарĕç.

Çавна май штаб çынсене лăпкă пулма, хăрушсăрлăх мерисене уяма, право хуралĕн органĕсен тата ятарлă службăсен ĕç-хĕлне чăрмантарасран сыхланма ыйтать.

**К.НИКОЛАЕВ.**

## Çулла, хĕвел, çутă уявĕ

***Çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче Комсомольски районĕнче опекун тата усрава илнĕ çемьесем валли ятарлă уяв йĕркеленĕ. Ăна Пĕтĕм тĕнчери ачасене хӳтĕлемелли куна халалланă.***

Пухăннисене – ашшĕ-амăшĕпе ачисене, вĕрентекенсене – Комсомольски район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Илдус Минетуллин, районти хĕрарăмсен канашĕн координаци канашĕн членĕ Валентина Тихонова саламланă. Комсомольски район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн опекăпа попечительство органĕн ертӳçи Татьяна Галзанова ачасене усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕ пирки ăшă сăмах чылай каланă. Уява клоунсем хутшăнни, тĕрлĕ вăйă йĕркелени ачапча кăмăлне çĕкленĕ. Праçник вĕсене пĕр-пĕринпе çывăхрах паллаштарнă, туслаштарнă. Юлашкинчен шăпăрлансем асфальт çине пурăсемпе хăйсем телейлĕ çемьене епле курнине ӳкернĕ.

**Р.ИВАНОВА.**

## Спорт кафедри – 50 çулта

***И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн физкультурăпа спорт кафедри 50 çулхи юбилейне уявланă.***

Çĕнĕ тытăм çар кафедрин никĕсĕ çинче йĕркеленнĕ. Малтанлăха унта 3 преподаватель ĕçленĕ, çулсерен вĕрентекенсен йышĕ ӳснĕ. Нумай çул кафедрăна ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе СССР спорт мастерĕ, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Орест Маркиянов ертсе пынă. Хальхи пуçлăхĕ – ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Авенир Ермолаев. Каярах кафедра çумĕнче спорт клубĕ уçăлнă. 50 çул хушшинче унта СССР тата Раççей спортăн вун-вун мастерне çитĕнтернĕ. Вĕсенчен чи паллисем – Олимп вăййисене хутшăннă Елена Грузиновăпа Надежда Пашкова, тĕнче ăмăртăвĕн çĕнтерӳçи Владимир Григорьев тата ыттисем. Паянхи кун университетра спортсменсемпе студентсен ăсталăхне туптама пурлăхпа техника никĕсĕ те пуян. 2004 çулта спорт комплексĕ хута кайнă, унта çуллен вун-вун турнир иртет. Аслă шкулăн кашни корпусĕнче уйрăм спортзал ĕçлет, Çĕрпӳ районĕнче спорт лагерĕ пур. Спортăн тĕрлĕ енĕпе 25 секцие çĕр-çĕр студент çӳрет.

**Е.АНДРЕЕВ.**

**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**



# ĔМĔР ПУРĂН – ĔМĔР ВĔРЕН...

**Ваттисен çак каларăшĕ ăслăлăх-тĕпчев институчĕсенче, сăнав лабораторийĕсенче тăрăшакансене çеç пырса тивменнине паян çĕр ĕçченĕ лайăх ăнланать. Палăрăмлă та курăмлă ӳсĕм çитĕнӳ тăвас тесен кирек камăн та малтан хăйĕн пĕлĕвне пуянлатмалла, тавра курăмне анлăлатмалла, темĕнле кăткăслăх пытарса тăракан ыйтăва та уçăмлă хурав пама пĕлмелле. Сăмах та çук: тыр-пул çитĕнтерекен те паян аграри тытăмĕнчи çĕнĕлĕхсене алла илмесĕр пӳлмене пуянлăхпа тултараймĕ.**

**«Пирĕн ĕçре нимĕнле вак-тĕвеклĕх те çук. Эпир малтисенчен вĕренессине, вĕсен опытне çул парассине яланах тĕп вырăна хума тăрăшнă», – тет Йĕпреç тăрăхĕнчи паллă çĕр çынни, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ Валентина Белова. Вăл тивĕçлĕ канăва тухиччен «Красный фронтовик» колхозăн агрономи службине ертсе пынă.**

**Мĕнлерех тăрăшулăхпа тата пуçарулăхпа ĕçленĕ çак хĕрарăм! Чăваш ял хуçалăх институтĕнче /халĕ – академи/ илнĕ пĕлӳпе кăна çырлахман Валентина Филимоновна. Малалла вĕренессине чи малти вырăнта тытнă, колхозниксемпе механизаторсем валли хуçалăхра ял хуçалăх пĕлĕвĕсен шкулне йĕркеленĕ. Тахçан Кĕлĕмкассисем кашни гектартан 10-15 центнер тырă пухса кĕртнине те лайăх тенĕ, пурăна-киле 25-30 центнерпа танлашакан çитĕнӳ те тивĕçтерми пулнă вĕсене.**

**Кирек мĕнле тăпра та, вăл пулăхлă-и, пулăхлă мар-и, хăйне чăн-чăн хуçа пек пăхнине юрататать. Енчен те кăткăс, теветкеллĕ лару-тăрура ĕçлеме тивет тĕк хресчене икĕ хут ытларах вăй хума тивет. Валентина Белова агроном-новатор районти ĕçтешĕсене кун пирки тăтăшах асăрхаттарса, ас тутарса тăратчĕ. Шел, халĕ тивĕçлĕ кану ирĕклĕхĕпе усă куракан тыр-пулçă çинчен иртнĕ вăхăтпа çырмалла пулса тухрĕ. Куçпа виçейми пусăсенче вăл çĕнĕ сортсем татах çитĕнтеретчĕ ĕнтĕ, анчах юлашки вăхăтра сывлăхĕ чир-чĕре пула палăрмаллах хавшанипе юратнă ĕçрен уйрălма тиврĕ ăна. Вăл кайнă хыççăнах хуçалăх ертӳлĕхĕшĕн тĕп тĕллев пулса тăнă «Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен» каларăш Кĕлĕмкассипе Туçа тăрăхĕнче хăйĕн тĕп пĕлтерĕшне çухатма тытăнни куç кĕрет. «Красный фронтовик» унччен кашни çулах пăрçа акатчĕ. Начар тухăç нихăш çул та илмен. Паян çак культура пусă çаврăнăшĕнче çук. Туса илесси тăкаксемпе çыхăннă тесе сăлтавланă. Белокпа тата клейковинăпа пуян çурхи тулă лаптăкне те икĕ хут пĕчĕклетнĕ.**

**Хăй вăхăтĕнче Валентина Белова тĕслĕхĕпе районта нумай çул ӳсекен пăрçа йышши культурăсене ытларах акса тума, çавăн пекех пусă çаврăнăшĕнче клеверпа люцернăна та тивĕçлĕ вырăн пама тытăннине палăртмалла. Паянхи кун çак курăксен лаптăкĕсем 1200 гектартан та иртеççĕ. Клеверпа люцерна иккĕшĕ те сидерат ӳсен-тăрансен çемйинчен. Хуçалăхсем люцернăна пĕр уйра 5-6 çул таран тытаççĕ. Валентина Филимоновна шухăшĕпе – ку тĕрĕс мар, курăкшăн 3-4 çул çителĕклĕ-мĕн. Çак тапхăрта вăл тăпрана кислородпа тата тутлăхлă япаласемпе пуянлатма та, çĕр тытăмне лайăхлатма та ĕлкĕрет. Пилĕк çул хыççăн люцернăна пусă çаврăнăшĕнче тытни тăкаклă, мĕншĕн тесен тĕп тымар тытăмĕн тĕрекĕ çухалма пуçлать.**

**Люцерна – нумай çул ӳсекен паха курăк кăна мар, тырăсем умĕн акмалли чи лайăх культура та. Çакă паллă: клеверпа люцернăран пысăк пахалăхлă утă тата силос хатĕрлеме йывăр – тăкак чылаях пуçтарăнать. Пĕтĕмĕшле илсен пăрçа йышши культурăсенчен ытларахăшĕ силос валлиех мар, вĕсем лайăх пахалăхлă сенажа юрăхлă. Люцернăра витаминпа каротин тата микроэлемент нумай пулни çак апатăн тутлăлăхне ӳстерет. Ĕнесем люцерна сенажне ним юлмиччен çисе янине асăрханă-и? Илепертен хывнă силос та пахалăхлă.**

**Ял хуçалăхĕнче, пайăррăн илсен çĕр ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсене çул парса пынă çĕрте, иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенчи пек йывăрлăх-чăрмав халĕ çук темелле. Чикĕ леш енчи анлă сарăлнă информаци технологийĕсемпе те çийĕнчех паллашма майсем пур. Интернет пулăшнипе таçта та «çитетĕн», темĕн те пĕлетĕн. «Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен» каларăша кăна манăçа хăварар мар. Агрономсене – çĕр ĕç технологĕсене – куллен-кун пулăшса пырас ĕçре ют çĕр-шывсенче, çавăн пекех Раççейĕн уйрăм регионĕсенче усă куракан «Уй журналĕ» тесе ят панă кăсăк программа пĕлтерĕшĕ пысăк пулассăн туйăнать. Унта кашни уйăн уйрăмлăхĕсене шута илессĕ: вăл е ку пусăри тăпра пахалăхĕ мĕнле пулни, унта мĕнле культурăсем çитĕнтерни, мĕнле удобрени тата ăна мĕн чухлĕ хывни, тухăç мĕн чухлĕ пулни, продукци мĕн хака кайса ларни уçăмлăн курăнать. Йĕркеллĕ çырса пыни малтан тунă йăнăшсенчен хăтăлма, тĕллевсем палăртнă чухне малашнехи аталанăва уçăмлăрах курма пулăшасси пĕрре те иккĕлентермест.**

**Пурăна-киле ку программа Чăваш Енри агрономсемшĕн те куллен усă курмалли «кĕнеке» пулса тăрасса шанатăп.**

**Пĕтĕмлетсе çак шухăша палăртассăм килет: ăслăлăх техника прогресĕ малалла хăватлăн аталанса пыни хăйсен ĕмĕрне çĕр çинче ĕçлесе ирттерекенсен умне пĕр ыйту хыççăн теприне кăларса тăратать, вĕсене вăраха ямасăр ăнăçлă татса пама паянхи хресченĕн самана таппинчен юлмасăр утма тăрăшмалла. «Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен» тенине ăша хывакансем шăпах çапла тăваççĕ те.**

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

## Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 20, çĕрле 10 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 29 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 9 минут.**

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăртан çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 24, çĕрле 13 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 34 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 11 минут.**

# «Асанне арчи» – пуласлăх сăпки

***Чăваш ялĕнчи кашни килте йывăçран ăсталаса тимĕрпе эрешленĕ арча упранать. Мĕнле кăна тупра çук-ши унта? Ахахмерченпе, тенкĕсемпе илемлетнĕ тухья, хушпу, масмак, тевет, çуха, енчĕк, алка, шўлкеме, ама, çум çакки, хўре, сурпан, пиртен çĕленĕ туй тумтирĕ, хĕр-упраçпа хĕрарăмăн, арçыннăн çуллахи тумĕ…***



Çав арчана чăваш юратса «асанне арчи» тет. Çавăн пек арча пирĕн килте те пурччĕ. Ас тăватăп-ха: ача чух ăна асаннепе, аннепе, аппасемпе, аттен йăмăкĕпе пĕрле уçса унти япаласене тăхăнса пăхнине, алăпа тытса киленнине, çав тума аслисем вăййа тăхăнса тухнине. Ĕлĕкрен упраннă япаласене алла тытсан чун савăнатчĕ, асамлă шевлесемпе çуталатчĕ, сурпан, тутăр çинчи тĕрĕсене курсан вара чунра темĕн пăчăртанса чĕпĕтетчĕ, куçран çут куççуль юхасси патнех çитетчĕ. Ун чух ăспа çав туйăмăн пĕлтерĕшне ăнлансах та кайман пуль. Çулсем иртсен çеç асанне арчи пире аваллăхпа çыхăнтаракан вăчăра пулнине ăнланса илнĕ. Асанне арчине манăн ытарлăн: «Чун сăпки», – тесе те калас килет.

Çапла, несĕлсен арчара упранакан пуç капăрĕ-эрешĕсем, кĕпи-саппунĕсем пире паян çак çĕр çинче чăваш пулсах пурăнма пулăшаççĕ, хамăр тымарсене сĕткен парса чĕртеççĕ, пулас ăрусене аваллăхпа мăнаçланма май туса параççĕ. Çўлерех асăннине шута илсе Шупашкарти «Нарспи» клуб «Асанне арчи» проектпа Шупашкар хула администрацийĕ ирттернĕ «Общество хаклавĕ – 2011» конкурсра «Тăван çăл куç» номинацире 1-мĕш вырăн йышăнса премие тивĕçнĕ. Çак проектпа килĕшўллĕн «Нарспи» клуб ĕçченĕсем чунпа çеç мар, наципе те пурте чăвашсем, виçĕ çулта ятарлă 20 ытла урок ирттернĕ. Ача сачĕсемпе, шкулсемпе тата ытти тĕрлĕ организаципе çыхăнса вырăна тухса та, клубра та тĕл пулусем йĕркеленĕ. Кăçал çеç «Асанне арчипе» тĕп хулари 1-мĕш гимнази, Шупашкарти Мускав районĕнчи реабилитаци центрĕ, 158-мĕш ача сачĕ тата Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлў паракан куç курманнисен ятарлă интернат шкулĕнче ăс пухакан ачасемпе ĕçченĕсем паллашма пултарнă.

Мĕн-ха вăл «Асанне арчи»? «Нарспи» клуб ертўçи Л.Малина-Константинова маçтăрсене йывăçран ятарлă арча ăсталаттарнă, тĕрлĕ тĕслĕ сăрăпа сăрласа илемлеттернĕ. Арчана вара халăх ăсти ята тивĕçнĕ Лидия Евсеевна хăй аллипе çĕлесе, эрешлесе, тĕрлесе илемлетнĕ тухья-хушпупа, масмак-теветпе тата асламăшĕнчен упранса юлнă пир кĕпесемпе, сурпансемпе, тутăрсемпе, турăш кĕтессине хитрелетсе çакакан питпе ал шăллисемпе тултарнă. Пуян тупраллă çав арча «Нарспи» клубăн залĕнче упранать. Кашни тĕл пулурах ăна яр уçса унти япаласене типтерлĕн кăларса сĕтел çине хураççĕ. Хула ачисем çак япаласене тăхăнса пăхса, алпа тытса киленеççĕ. Клуб ĕçченĕсем кашни тĕл пулăва ятарласа хатĕрленеççĕ. Пулас уявăн сценарине Алиса Лукина – «Сарпике» халăх ташă ансамблĕн ертўçи – çырать. Мероприятин тĕп тĕллевĕ: ачасене тăван культурăпа, халăх историйĕпе паллаштарасси. Николай Пыркин – «Нарспи» халăх юрăпа ташă ансамблĕн аккомпаниаторĕ – сценарипе килĕшўллĕн юрă-кĕвĕ пуçтарать, асăнмалăх сăн тата фильм ўкерет. Еленăпа Михаил Тереховсем, «Нарспи» халăх юрăпа ташă ансамблĕн балетмейстерĕсем, чăваш ташшин шалти черченлĕхне асăрхама, ташлама вĕрентеççĕ. «Нарспи» халăх юрăпа ташă ансамблĕн хормейстерĕ Иосиф Александров уява пухăннă пĕчĕк хăнасене чăваш юррисен илемĕпе çепĕçлĕхне туйма тата юрлама хăнăхтарать. Проект сценарийĕпе килĕшўллĕн тĕл пулусене профессионал сăвăçсемпе юрăçсене, артистсене те йыхравлаççĕ.

Çак кунсенче Культура çулталăкне халалланă уява «Нарспи» клуба килсе курма эпĕ те тивĕçрĕм. Хальхинче чăвашлăхпа хĕрўлленсе çунакан клуб ĕçченĕсем япăх куракан ачасене йыхравланăччĕ. Ятарлă сценарие интернат шкула малтанах ярса панă. Хĕр ачасемпе арçын ачасене сăвă пăхмасăр вĕренме пулăшаканĕсем – пултаруллă вĕрентекенсем. Уяв пуçлансанах шăпăрлансемпе пĕрле ура çине тăрса малтан Илле Тукташ сăввипе Герман Лебедев кĕвĕленĕ республика гимнне итлерĕмĕр, пĕрле юрларăмăр. Унтан ачасем пухăннисене чăвашла тата вырăсла патшалăх символĕсемпе паллаштарчĕç, ăстасемпе пĕрле чăваш ташшине ташлама хăнăхрăмăр. Эпĕ те пĕчĕк тусăмсене «Алфавит» кĕнекемри сăвăсене вуласа патăм. Ачасем хăйсенче чăваш юнĕ юхнине чĕрепе туйччăр тесе клуб ĕçченĕсем хĕр ачасене «Асанне арчинчен» кăларнă масмаксем çыхса ячĕç, арçын ачасене вара чăваш кĕпи тăхăнтартрĕç. Ачасем арчаран илнĕ тупрапа паллашнă вăхăтри пĕр самант вара халĕ те куç умĕнчех. Чипер хĕр ача пуçне çыхнă масмака куçĕ япăх куракан арçын ача малтан аллипе тытса тĕрĕслерĕ, унтан чăтаймасăр эреш енне туртăнса шăрçасемпе тенкĕсене шăршласа пăхрĕ. Хумханнипе чунăм пăчăртанса илчĕ, пыр тĕпне йўçек чăмакки капланса килчĕ. Айккине пăрăнса аслисене вун-вун интереслĕ ыйту парса тĕрĕс хурав итлекен ачасем çине пĕр хушă тинкерсе лăплантăм.

…«Нарспи» клубран киле çĕкленўллĕ кăмăлпах тухса утрăм. Çакнашкал тĕл пулуявсем ачасене тăван халăх шăпипе тарăнрах паллашма, несĕлсен историйĕпе, культурипе, ташши-кĕввипе, йăли-йĕркипе çывăхрах туслашма, паянхи Чăваш Ен мĕнлерех аталаннине пĕлме, курма, сăнама, республикăра пурăнакан ытти халăхпа туслă пурăнмаллине ăнланма май туса параççĕ. Майне пĕлсе акакан вăрлăх яланах тухăçлă çимĕç параканччĕ. Çак чунлăх вăррине черченкĕ чуна-тăпрана вырнаçтаракансене вара чун-чĕререн тав сăмахĕ калатăп. Çут çанталăк, пурнăç саккунĕнчен иртейместĕн: мĕн акан – çав шăтать.

■ **Альбина ЮРАТУ**

*Ахрăм*

# Ырă йăла-йĕркепе пуян повеç

Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев Элĕк районне кĕрекен Тури Вылă ялĕнче 1924 çулхи авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан тантăшĕсемпе пĕрле Хĕрлĕ Чутай районне кĕрекен Штанашри вăтам шкула утнă. Çамрăклăхĕ хаяр вăрçă çулĕсемпе тўр килнĕ: Курск пĕккинчен Хĕвел анăçнелле çул тытнă. Виçĕ хутчен аманнă, амăшĕ патне ывăлĕ Санькка вилнĕ тесе виçĕ хутчен ырă мар хыпар çитнĕ. Чăтнă салтак, пăшалне çирĕп тытса Порт-Артура çитнĕ. Пирĕн телее Александр Артемьев, ялти пек каласан Санькка, чипер çаврăнса çитрĕ тăван Тури Вылăна.

Эпир кўршĕллĕ пурăнаттăмăр. Пĕр урамра, хире-хирĕçех. Унăн амăшĕ Матрўн аки пирĕн патăмăра пыман пĕр кун та пулман пулĕ. Пирĕн асаннепе питĕ туслăччĕ салтак амăшĕсем. Аттепе пĕр тăван икĕ пиччĕшĕ вăрçăра пуç хучĕç, атте чиперех таврăнчĕ-ха. Ассăн сывласа Матрўн акипе асанне иккĕшĕ те куллен макăратчĕç. Матрўн аки юрласа та яратчĕ ăшĕ çуннипе. Сăмах ăстиччĕ ĕнтĕ. Ывăлĕ Санькка та çав юрă-халапа амăшĕнчен илтсе ўснех çав. Халăх сăмахлăхне, йăла-йĕркене лайăх пĕлетчĕ ĕнтĕ çыравçă. Вăрçă хыççăн калав хыççăн калав, повеç-роман калăпларĕ, сăвă-юрă хыврĕ. Кашнинчех чăваш чĕлхи янăравлă та илемлĕ, çăл куç шывĕ пек шăнкăртатса юхать унăн хайлавĕсенче. Унăн «Улма йывăç авăнать» повеçне вуланăçемĕн вулас килет, тата мĕн калать-ха тесе шухăшлатăн. Унти ĕçсем хамăр ялтах пулса иртеççĕ, тăван тавралăхĕ те, ял-йыш та пурте хамăр курса ўснĕ вырăнсем. Ку повеçе вăл 1957 çулта çырса пĕтернĕ, çав çулах кĕнеке вулакансем патне çитнĕ.

Пĕрремĕш пайĕ «Ашшĕпе ывăлĕ» ятлă. Ячĕ те авалтан пыракан йăлапа çыхăннă. Чăвашсем ашшĕпе ывăлĕ, амăшĕпе хĕрĕ теççĕ-çке.

Пĕрремĕш йĕркере «Сакăр çул савнă сарă хĕр туй тăвас чух сивĕнчĕ», – юрлатчĕç ĕлĕк. Çапла, ял пурнăçне пырса кĕтĕмĕр те, çур акиччен туй тăвас тенĕччĕ Праски инке. Апла ĕççем хĕл иртнĕ тĕлелле пулса иртеççĕ. Вылă шывĕ çинче колхоз электростанцийĕ пулнă, яла çутă панă. Вăрçă хыççăнхи ял пурăнать. Праски инке мăшăрĕ Муççа мучи те калаçăва хутшăнать. Пулас кинне Праски инке халăх сăмахĕсемпе хаклать: «Ĕçремĕнре тĕл пулсан, хĕрĕ яланах манпа кăмăллă калаçать: пăрчăкан пекех çивĕч, чĕкеç пекех çепĕç чĕлхеллĕ. Хўхĕм хĕр ĕнтĕ! Ун пеккине ăçтан тиркен? Иккĕшĕ ачаран килĕштерсе ўсрĕç мар-и?» Муççа мучине автор улăп пек тĕреклĕ тесе сăнлать. Ашшĕ вĕт. Муççа мучи ваттисен каларăшĕпе уçăмлăн усă курать: «Сăмах çăвартан тухсан – хапхаран та тухатех çав. Хĕрĕх шăл витĕр тухсан – хĕрĕх яла çитет, теççĕ». Калаçу ывăлĕ çинченех пырать-ха. Ахальтен мар пулĕ: «Ачаш ача ашшĕ пуçне çапса çурĕ», – тенĕ авал. Ачаш пăхса ўстертĕмĕр çав, ача-аш! Авалхи ырă йăлапа хăйсене айăплаççĕ Çемен ашшĕпе амăшĕ. Ывăлĕ тăватă çул вăрçăра çўрерĕ, икĕ хутчен аманнă. Пĕрре те ачаш ўстермен те… Килти сăмаха, килти çўп-çапа ял çине кăларма хушман çав. Вулатăн та тĕлĕнетĕн. Каллех авалтан пыракан сăмах-юмаха аса илтерет автор: «Праски инке хурланать. Амăшĕнчен ытларах ачашăн кам хурлантăр ĕнтĕ? Мĕнле пулсан та ăна чĕре çумĕнче пурнăç панă, юнпа та, кăкăр сĕчĕпе тăрантарнă, май килнĕ таран лайăх ўстерме тăрăшнă. Вăл чирлемессерен амăшĕ çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр пăшăрханнă…» Çапла пулнă чăваш амăшĕ. Çемен киле час таврăнманшăн пăшăрханаççĕ ашшĕпе амăшĕ. «Каç пулсан – касакра, ир пулсан – ыйăхра...» Каччă вĕт. Кунта та вырăнлă сăмахпа усă курнă. Хĕрĕх çул пĕрле пурăнаççĕ Праски инкепе Муççа мучи. Хирĕç усал чĕнсе курман вĕсем пĕр-пĕрне. Муççа чăваш юманĕ пек тĕреклĕ. Тĕплĕ çын йĕрки-йăлине хисеплекенскер Куçма Мироныч патне сĕм çĕрле пырса кĕрсен, ваттисен йăлипе, çĕлĕкне хывса хул хушшине хĕстерчĕ.

– Ман килес... Ыр каç пултăр сире, Куçма Миронч!

– Килĕрех, килĕр, Моисей Иваныч, малалла иртсе ларăр, – терĕ Сурбеев çĕрлехи хăнана тĕпеле иртме сĕнсе.

Йăлт чăвашсен ĕлĕкхи йăли-йĕрки вĕт. Çапла каласа пырса кĕнĕ ĕлĕк çын патне. Кил хуçи те ăшă сăмахсем каласа кĕтсе илнĕ. Эх, сăмах çаврăнăшĕсем тата... «Лар эсĕ, атте. Ура çинче чăнлăх çук теççĕ». Ларса итле е тата «ал турине шеллесе шăналăк çурнă» тенĕ пек...

Салановсем çинчен каланă май Александр Артемьев хăйĕн тăван ялне сăнлать:

«…Çурхи тўпе янкăр тăрă, Алтăр çăлтăр хăйĕн кукăр аврине Çăка варĕ çинелле кăнтарса, çакăнса тăрать, вăрман хыçĕнчен тухнă уйăх çур чăкăт пек курăнать, çур çĕр тахçанах иртнĕ ĕнтĕ». Çăка варĕ çыравçă çуралса ўснĕ урамран инçе мар, ача чухне унта çара уран тантăшĕсемпе пĕрле сахал-махал чупман вăл.

…Сывлăш уçă та тўлек, çурхи каç лăпкăн тĕлĕрет. Ял варринчи Мăн çăл çырминче кăна шыв кĕрлесе юхни илтĕнет.

…Мăн çăл! Еплерех сипетлĕ ун шывĕ. Мăн çăл шывне ĕçсе вăй пухнă А.Артемьев. Ăна асăнмасăр иртмест вăл хăйĕн хайлавĕсенче. Сăмах Праски инке çине куçать. Каллех ваттисен сăмахĕ вырăнлă: «Ывăлупа вăрçсан алăк хăлăпне тытсах тăр», – аса илтерет автор. Ашшĕпе ывăлĕ хирĕçсе кайни канăç памасть Праски инкене. Иртнĕ пĕтĕм пурнăçĕ куç умне тухать. Праски инке аса илĕвĕнче чăвашсен ырă йăла-йĕрки уçăмлăн курăнать: «Ўссе пĕве çитсе те Праски ял çине ят яман, улахра çĕр каçма юлман, вăйăсенчен çĕрлене юлса таврăнсан ваттисене хисепленĕ, хăйĕнчен аслине ятран чĕнмен; пысăк уявсене кайса çўремен вăл: çи-пуçĕ ытла япăхчĕ... Мăнтарăн ах! темесĕр пĕрре сывламан, Муççа та вăйлă йĕкĕтчĕ: ярмăрккара пуян ачисемпе кĕрешесçапăçас пулсан ун çине тухаканни çукчĕ çав… Хĕрпе каччă… Ваттисен йăлисене çирĕп тытса пыраççĕ вĕсем. Автор вулакана Катмар улăхне илсе çитерчĕ. Ял çумĕнчех Катмар улăхĕ. Çакăнта тĕл пулчĕç те хĕрпе каччă. Çăка варĕпе шап-шур тĕтре ишетчĕ, улăха утă шăрши сарăлнăччĕ… Туйне тунă-туманах Муççа вăрçа тухса кайрĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пыратчĕ. Туй хыççăнах анкарти вĕçне лартса хăварнă вăтăр улмуççи хăй таврăниччен çимĕç кўрекен пулчĕç.

Муççа таврăнсан тепĕр çулне Çемен çуралчĕ. Пулас пахчаçă. Чăвашсем мĕн авалтан улма пахчи çитĕнтернĕ. Муççа та пахчана юратать, асăрхаса пăхсах тăрать улмуççисен пурнăçне.

Урамра юрă сасси илтĕнчĕ.<br>
Хулма та йывăç авăнач, эх!<br>
Хулма та ăнса пулнăран.<br>
Пирн те чунĕ савăнать, эх!

Хĕлип хăта юрлать халăх юррине. Чунĕ уçă ун – яланах ярханах. Чĕлхи çеç, пиçен евĕр, йĕплĕ. Халăх сăмахĕсемпе сăнлать çыравçă Хĕлип хăтана. Праски инке те хĕрĕнкĕ Хĕлип хăтана кăмăллăн йышăнать. Авалхи йăлапа килнĕ çынна пăхмалла. Хĕлип мучи калавне итленĕçемĕн итлес килет.

– Ырă йывăç усал çимĕç кўмест тетчĕç. Чи малтан пахчаçăсем каланă ку сăмаха. Пăтă пек пăтратса ячĕ пурнăça. Ма чĕлхене кăшт çыртас мар? Сăмахăн чĕлпĕрĕ çук ун – пĕрре вĕçерĕнсен тыттармĕ. Э, тыттармĕ! Чăтаймарăм, ача, Праски. Йĕп çинчи пек ăшталанса лартăм-лартăм та – тухса утрăм. Йўçĕ сăмах çине йўçĕ сăра-эрех пулчĕ.

...Эпир те çисе курнă салтак çăкрине – тутлах мар вăл, ача, эс, тутлă мар-çке вăл, Праски! Куççульпе йĕпетмесĕр те çемçелмест – хытă. Мĕн чухлĕ халăх сăмахĕсемпе каларăшĕсем... Акă Хĕлип Салоновсем патĕнчен килне кайма пуçтарăнчĕ. Хĕлип авалхи йăлана аса илтерет:

– Ăсатса яр! Каçхи çынна ăсатса ямасан ыйхă вĕçет. Ыйхуна хампа пĕрле илсе кайăп таçта. Епле çирĕп йĕрке пулнă. «Ваттисенчен те вĕренмелле», – ялан çапла шухăшлать Çемен. Ачалăхне аса илет вăл. Акă вулакан Елюк сăрчĕ патне çитрĕ Çеменпе пĕрле. Тури Вылă ялĕ ку. Елюк сăрчĕ çавăнта, Капкас текен урам та тăсăлса выртать. Литюкпа паллашрăмăр.

– Эпĕ пысăк сад лартса ўстеретĕп, çитĕнем вăт! Ак çакăнта, – пĕчĕк Çемен Елюк сăрчĕ тавра аллисемпе çавăрттарчĕ, ак çакăнта йăлтах ман улмуççисем ўссе ларĕç.

Çемен хăйĕн ача чухнехи ĕмĕтне пурнăçлатех. Сăмах повеçре çавăн çинчен пырать те. Салтака каймалли кун иртрĕ. «Вилместĕн эсĕ вăрçăра, чунăм сисет. Сывах таврăнатăн, çĕнтерсе таврăнатăн», – аса илетчĕ Çемен инçетри çĕр-шывсенче. Чăнах та, сывах таврăнчĕ, çĕнтерсе таврăнчĕ Çемен. Таврăннă чухне яла çитеспе Автан çырмине чупса анчĕ. Тăван тавралăх... Çĕмĕрлерен таврăннă чухне çул Автан çырми пуçĕпе иртет çав. Вара Тури Вылăна пырса кĕретĕн. Çемен тăван яла таврăнчĕ. Ачаран тытнă ĕмĕчĕсене тўрре кăларас тесе аслă шкул пĕтерчĕ, тăван ялне таврăнчĕ.

Повеç тăршшĕпех ĕç-пуç чăвашсен ырă йăла-йĕркипе çыхăнса пырать. Улма ăнса пулчĕ, улма йывăç авăнать, улми тулăх пулнăран. Çеменпе Лида пĕрлешрĕç. Мĕн шухăшлани пурнăçланчĕ. Тăван тавралăхĕ тата... Повеçĕн тăваттăмĕш пайĕ Выл улăхне асăннипе пуçланать: «Турикассем утта тирпейлĕ çулса пуçтарчĕç. Вылă улăхĕ тăрăх çатан карта тытса çавăрнă йĕкĕр капансем ларса тухрĕç. Хытă çинче çўренĕ выльăх кĕтĕвĕ симĕс каюллă улăха анчĕ»...

■ **Борис БОРИСОВ,**
Элĕк районĕ.
Тури Вылă ялĕ

## •Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•

# Республика кунне, Акатуя хатĕрленсе

Культура çулталăкне халалланă мероприятисем йышлансах пыраççĕ. Юлашки тапхăртисенчен пысăк пайĕ, тĕпрен илсен, халăхсен хушшинчи VII Шупашкарти кинофестивальпе çыхăннăччĕ. Тĕп хулари пур кинотеатрта тенĕ пекех иртрĕç унпа çыхăннă ĕçсем. Мероприятисене пин-пин çын çитсе курчĕ. Шупашкарсем çеç мар, Патăрьелсемпе Хĕрлĕ Чутайсем те паллашрĕç кинофестиваль хăнисемпе.

Çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче библиотека ĕçченĕсене саламларăмăр. Хăйсене халалланă куна вĕсем те Культура çулталăкĕпе çыхăнтарнă. Республика шайĕнче çеç мар, районтисем те маттур библиотекарьсене чысларĕç.

Республика кунĕ çитиччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Кăçал ăна Комсомольски районĕнче те паллă тума хатĕрленеççĕ. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче тĕп хулари Хĕрлĕ тўремре Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ иртĕ. Культура çулталăкĕнче ăна тата та хăватлă курас килет. Аякран пуçтарăнакан йăхташăмăрсене те хамăрăн пултарулăхăмăрпа савăнтарасчĕ, хăйсен юрри-кĕввипе те паллашасчĕ.

# Комсомольскисем – уяв хуçисем



Республика кунне ку таранччен Шупашкарсăр пуçне Етĕрне, Шăмăршă, Елчĕк, Канаш, Куславкка, Вăрмар, Йĕпреç, Патăрьел районĕсем тата ытти вырăнта паллă турĕç. Культура çулталăкĕнче вара çак чыса Комсомольскисем тивĕçрĕç.

Кунта халĕ ĕç вĕресе тăрать: сала çыннисем çурт-йĕр çывăхне тирпей-илем кўртеççĕ, чечек лартаççĕ, çул-йĕр ăстисем тротуарсене, урам хушшипе иртекен асфальт çула тикĕслеççĕ, строительсем тĕп паркри картасене юсаççĕ.

Республика кунĕнче Комсомольские хăнасем таçтан та килсе çитĕç. "Намăс курмалла ан пултăрччĕ, пирĕн пирки вĕсем лайăх кăмăлпа çеç аса илччĕр", – теççĕ район ĕçченĕсем.

# "Сувар" Тав çырăвне тивĕçнĕ



Раççей культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Музыкантов ертсе пыракан "Сувар" халăх ансамблĕ Культура çулталăкне халалласа ирттерекен мероприятисене хастар хутшăнать. Акă нумаях пулмасть вăл Пенза патшалăх университетне çитсе килнĕ. Унта, ЮНЕСКО пуçарăвĕпе, студентсен Пĕтĕм тĕнчери "Культура калаçăвĕ" форумĕ виççĕмĕш хут иртнĕ.

Уяв тĕллевĕ пархатарлă: тĕрлĕ халăх хушшинчи культура çыхăнăвĕсене çирĕплетесси, вăл е ку халăхăн хăй евĕрлĕхне ыттисен хушшинче сарасси. Асăннă уява Пензăна чикĕ леш енчи 19 çĕршыври ансамбльсем тата Раççейри 23 халăх коллективĕ хутшăннă.

Анатолий Музыкантовăн "Сувар" ансамблĕ чăваш, ытти халăх ташшисемпе паллаштарнă.

# Туризм ыйтăвĕпе – семинар

Кăçалтан пуçласа туризм ыйтăвĕпе ЧР Культура министерстви ĕçлеме пуçланă. Асăннă отрасль культурăпа тўрремĕнех çыхăнни пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Культура çулталăкĕнче унăн витĕмне тата та ўстерес тесе ĕçлеççĕ республикăра. Акă нумаях пулмасть Шăмăршă районĕн культура аталанăвĕн центрĕнче "Наци сĕмĕллĕ туризм" ятпа семинар-канашлу иртнĕ. Унта районти культура учрежденийĕсен директорĕсемпе библиотекарьсем хутшăннă.




Вĕсемпе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - администрацин социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ В.Петьков тĕл пулнă.

Семинарăн иккĕмĕш пайĕ "Чăваш вăрманĕ" наци паркĕнче иртнĕ. Культура ĕçченĕсем паркпа тĕплĕн паллашнă, "Эко-невидаль" арт-сукмакпа утса тухнă, ĕмĕрхи хырсен хушшинче хўтлĕх тупнă палăксемпе киленнĕ. Культура çулталăкне халалласа хăйсен "объектне" – "Тимошка клоун" ят панăскере – хăварнă.

# Хорпа юрласси çĕнĕрен вăй илет

Куславкка районĕнчи культура ĕçченĕсем те Культура çулталăкĕнче хастарлăха ўстернĕ. Славян çырулăхĕпе культурине уявланă кунсенче кунта хор ассамблейи иртнĕ. Районта Пĕтĕм Раççейри хор обществин пуçламăш уйрăмне йĕркеленĕ. Ăна ертсе пыма Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Диляра Стуловăна шаннă.

Ассамблейăна тăватă хор хутшăннă. Вĕсенчен виççĕшĕ Куславккари ачасен музыка шкулĕнче ĕçлеççĕ, тепри – хулари культура ĕçченĕсен пĕрлештернĕ хорĕ.

Уява район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Марина Солдатихина хутшăннă, сăмах каланă, хорпа юрласси юлашки вăхăтра çĕнĕрен аталанма пуçланине ырланă.

Ачасен хорĕсем чăваш, вырăс композиторĕсен, чикĕ леш енчи классиксен произведенийĕсене шăрантарнă. Культура ĕçченĕсен пĕрлештернĕ хорĕ концерта "Летите, голуби", "Вижу чудное приволье" юрăсемпе вĕçленĕ.



**Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•

